25-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 июль 17 эрнекун 165(6100) №

Чăваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Колхозсемпе совхозсен Пӗтӗм Союзри социализмлă ăмăртăвӗ

СССР Çӗрӗç Халăх Комиссариачӗпе СССР Наркомземӗн Политуправленийӗнче

СССР Çӗрӗç Халăх Комиссариачӗпе СССР Наркомземӗн Политуправленийӗ вăйлă тырпулшăн пыракан социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогӗсене облаçсемпе крайсем тата республикăсем тăрăх пăхса тухса, ăмăрту условийӗсем тăрăх, **Оборонăн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗçлӗ кандидатсем тесе,** государствăн çураки планне ытлашшипех ирттерсе тултарнă çак облаçсемпе крайсене тата республикăсене йышăннă.

Приморски крайӗ	çураки планне	119 процент тултарнă.
Узбек ССР-ӗ	» »	108 » »
Иркутск облаçӗ	» »	106 » »
Казах ССР-ӗ	» »	104 » »
Горький облаçӗ	» »	101 »
Чкалов »	» »	101 »
Куйбышев »	» »	101 »
Алтай крайӗ	» »	100,4 » тултарнă.

Çак облаçсемпе крайсем тата республикăсем кăçалхи çул акнă çӗр лаптăкне, пӗлтӗрхипе танлаштарсан, чылай ӳстернӗ тата колхозсенче государствăн выльăх-чӗрлӗх ӗрчетмелли планне пурнăçа кӗртес тӗлӗшпе лайăх тӗслăхсем кăтартнă.

* * *

СССР Çӗрӗç Халăх Комиссариачӗпе СССР Наркомземӗн Политуправленийӗ, колхозсенче выльăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе малалла çӗклессишӗн пыракан Пӗтӗм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогӗсене пăхса тухса, ăмăрту условийӗсем тăрăх, **Оборонăн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗçлӗ кандидатсем тесе,** выльăх-чӗрлӗхӗн йышне ӳстерес тӗлӗшпе чи лайăх результатсем кăтартнă çак облаçсемпе крайсене тата республикăсене йышăннă:

	Выльăх-чӗрлӗх хисепӗ, 1942 çулти январӗн 1-мӗш тӗлне мӗн чухлӗ пулнипе танлаштарса процентпа шутласан, çакăн чухлӗ ӳснӗ		
	Мăйракаллă шултра выльăхсем	Сурăхсемпе качакасем	Сыснасем
Иваново облаçӗ	149	172	121
Алтай крайӗ	118	143	125
Горький облаçӗ	116	135	108
Свердловск облаçӗ	110	135	—
Казах ССР-ӗ	109	132	116
Таджик ССР-ӗ	107	119	—
Çурçӗр-Осетин АССР-ӗ	101	134	132
Кабардино-Балкар АССР-ӗ	101	123	113

Çак облаçсемпе крайсем тата республикăсем çуракине ăнăçлăн вӗçленӗ, государствăн çуртри акмалли планне ытлашшипех ирттерсе тултарнă.

* * *

СССР Çӗрӗç Халăх Комиссариачӗпе СССР Наркомземӗн Политуправленийӗ çавăн пекех тата çуртырри культурисем акмалли плана ытлашшипех ирттерсе пурнăçа кӗртнӗ çак облаçсемпе крайсем тата республикăсем те çуракине ирттерес тӗлӗшпе лайăх ӗçленӗ тесе палăртнă:

Калмык АССР-ӗ, Калинин облаçӗ, Киргиз ССР-ӗ, Ленинград облаçӗ, Коми АССР-ӗ, Дагестан АССР-ӗ, Бурят-Монгол АССР-ӗ, Чечено-Ингуш АССР-ӗ, Молотов облаçӗ, Хабаровск крайӗ тата Красноярск крайӗ,—ытти тӗслӗхсем енӗпе вӗсене халлӗхе Оборонăн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗçлӗ кандидатсен шутне кӗртме çук-ха.

ВЦСПС-па СССР Çӗрӗç Халăх Комиссариатӗнче тата СССР Наркомземӗн Политуправленийӗнче

ВЦСПС, СССР Çӗрӗç Халăх Комиссариачӗ тата СССР Наркомземӗн Политуправленийӗ, МТС-семпе МТМ-сен тата моторсем юсакан заводсен Пӗтӗм Союзри социализмлă ăмăртăвӗн малтанхи итогӗсене (çураки результачӗсем тӗлӗшпе пăхса тухса, ăмăрту условийӗсем тăрăх, **Оборонăн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗçлӗ кандидатсем тесе,** çураки планне ирттерсе тултарнă тата машинно-тракторнăй станцисем государствăн тракторпа ӗçлемелли планне пурнăçа кӗртес тӗлӗшпе чи лайăх результатсем кăтарнă çак облаçсемпе крайсене тата республикăсене йышăннă: Туркмен ССР-ӗ, Мускав облаçӗ, Таджик ССР-ӗ, Грузин ССР-ӗ, Краснодар крайӗ, Орджоникидзе крайӗ, Кабардино-Балкар АССР-ӗ, Чăваш АССР-ӗ.

Хӗрлӗ Çар боецӗсем валли--ăшă тумтирсем

ОКТЯБРЬСКОЕ. **(Телефонпа).** Районри ӗççынисем Хӗрлӗ Çар валли ăшă тумтирсем парас ӗçе активлăн хутшăнаççӗ. Ăшă тумтирсем пухма çӗнӗрен тытăннăранпа районӗпе 1.361 тир, 300 килограмм çăм, 110 мăшăр çăм алшиш, 50 мăшăр чăлхасемпе тăласем, 136 алшăлли, 53 çӗлӗк, 212 метр пир пухăнчӗ.

Чылай колхозсенче ăшă тумтирсем пухас ӗç ăнăçлăн пулса пырать. Чăнкассинчи колхозра 89 тир, 6 мăшăр алшиш, 6 çӗлӗк, 14 килограмм çăм, 2 мăшăр тăла, Туппай Ĕсмӗлӗнче—54 тир, 3 мăшăр алшиш, 8 килограмм çăм, 4 алшăлли, 4 мăшăр çăм чăлха пухса панă.

Ăшă тумтирсем пухас ӗçе тата анлăрах сарса яма тăрăшатпăр.

К. АЛЕКСЕЕВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

КУСЛАВККА. Июлӗн 16-мӗш. **(Телефонпа).** Фронтра нимӗç фашисчӗсене хирӗç кӗрешекен совет воинӗсем валли ăшă тумтирсем туса пама районри колхозниксем тирсем, çăм тата ытти япаласем параççӗ.

Ершерти Тельман ячӗпе тăракан колхозра Хӗрлӗ Çар валли ăшă тумтирсем пухасси çинчен колхозниксене ăнлантарса парас тӗлӗшпе Скворцов, Варламова, Долгова юлташсем активлăн ӗçлеççӗ. Колхоз членӗсем юлашки икӗ кун хушшинче 20 тир, 5 килограмм çăм, алшăлли тата ытти япаласем панă. Хурамалти «Çӗнӗ пурнăç» колхозра 3,5 килограмм çăм, Паймитри Каганович ячӗпе тăракан колхозра 2 килограмм çăм, 6 тир, çӗлӗксем панă.

Уйрăм колхозсенче ку ӗç начар пулса пырать-ха. Ăшă тумтирсем пухас тӗлӗшпе ӗçлекен комиссисен хăйсен ӗçне вăйлатмалла.

И. ШАРКОВ.

СОВЕТ СОЮЗӖ ТĂРĂХ

Фронтовиксен çемьисене пулăшаççӗ

Социальнăй обеспеченин облаçрипе хулари отделӗсем çар çыннисен çемьисене государство пособийӗ панисӗр пуçне тата урăх тӗрлӗ пулăшу та параççӗ. Çапла, акă, Мускав облаçӗнче миллион çурă тенке яхăн пӗр вăхăтлăх пособисем панă. Тула облаçӗн нимӗç оккупанчӗсенчен ирӗке кăларнă районӗсенче фронтовиксен 6.000 ачине атă-пушмак, тумтир тата продуктсем панă. Калинин облаçӗнче 1.202 çемьене 1.500 центнер ытла тырă панă. Удмурт республикинче 13.500 ачана яслисемпе ача сачӗсене янă. Молотов облаçӗнчи Еловски районра колхозсем пӗр-пӗрне пулăшмалли кассин укçипе çар çыннисен çемьисен ватăлса çитнӗ членӗсене усрамалли çурт тытса тăраççӗ. (ТАСС)

Государство заемӗсен икӗ тиражӗ

Мускавра Союзсен Çуртӗнчи Октябрьски залра июлӗн 15-мӗшӗнче государство заемӗсен икӗ тиражӗ—Иккӗмӗш пилӗкçуллăх (тăваттăмӗш çулхи кăларăм) заемăн 24-мӗш тиражӗ тата СССР оборонине çирӗплетмелли заемăн 19-мӗш тиражӗ пулнă. (ТАСС)

Хуласенчен уйхирсенче ӗçлеме 200.000 çын кайнă

Хулари çынсем Казахстан уйхирӗсенче халхи вăхăтра 200.000 çын ытла ӗçлеççӗ. Вӗсем тырпул пухаççӗ, утă çулаççӗ, сахăр кăшманне çумкурăкӗсенчен тасатаççӗ, çӗрмамăкӗ акнă плантацисене мотыгăпа кăпкалатаççӗ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июлӗн 15-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Июлӗн 15-мӗшӗнче пирӗн войскăсем **Воронеж** районӗнче противника хирӗç çапăçса хаяррăн çапăçнă.

Хаяр çапăçусем пулнă хыççăн пирӗн войскăсем **Богучартан** тата **Миллеровăран** тухса кайнă.

Фронтăн ытти участокӗсенче нимӗнле улшăну та пулман.

* * *

Июлӗн 14-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаçӗсем фронтăн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗçсен 90 танкне ытла, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 160 автомашинине пӗтерсе тăкнă е сиенленӗ, зенитнăй артиллерин 7 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 4 складне тата горючи усракан 3 склада сирпӗнтерсе янă, противникăн пехотине 2 батальона çити сапаласа янă, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районӗнче çапăçусем хаярланнăçемӗн хаярланса пыраççӗ. Çирӗплетнӗ хăшпӗр рубежсем тата халăх пурăнакан хăшпӗр пунктсем темиçе хутчен алăран алла куçаççӗ. Хăшпӗр участоксенче пирӗн войскăсем наступлени туса пыракан противника хирӗç пырса çапса ăна сире-сире пăрахаççӗ тата пысăк çухатусем тӳстереççӗ. Летчик-штурмовиксем тата танксен пӗр соединенийӗ пӗрле çапăçса пӗр кун хушшинче нимӗçсен 1.000 ытла салтакӗпе офицерне, 12 танкне, 23 орудине, 36 автомашинине, 41 мотоциклне, 21 станковăй пулеметне тата пехота турттарса пыракан броньăланă темиçе машинине пӗтерсе тăкнă. Полковник Данилов юлташăн чаçӗнчи летчиксем юлашки темиçе кун хушшинче сывлăшри çапăçусенче нимӗçсен 51 самолетне персе ӳкернӗ. Летчиксем—кӗçӗн лейтенант Тимченко тата старши сержант Лаврененко, сывлăшра нимӗçсен 5 истребительне тӗл пулса, вӗсене хирӗç çапăçăва кӗрсе кайнă. Тимченко юлташ пӗррелӗш тытăçурах пӗр «Мессершмитта» персе ӳкернӗ. Лаврененкăн самолечӗ сиенленсе çапăçуран тухнă пулнă. Тимченко юлташ, хăй пӗччен юлнă пулин те, çӗнӗрен çапăçăва кӗрсе кайнă та нимӗçсен тата икӗ истребительне персе ӳкернӗ.

* * *

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче противник пирӗн оборонăн малти линине атакăланă пулнă. Нимӗçсен çав атакисене сирсе пăрахнă. Казаков юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири боецсем, контратака туса, питӗ кирлӗ çула тата çав çул патне пымалли вырăнсене контрольлесе тăракан высотана йышăнса илнӗ. Старши лейтенант Волков, красноармеецсем Чиркунов, Головин тата Щербинов юлташсем нимӗçсен 4 танкне пӗтерсе тăкнă. Старши лейтенант Котов противотанковăй пăшалпа персе нимӗçсен самолетне ӳкернӗ.

* * *

Противник пехотин икӗ роти, 5 танк пулăшса пынипе, Садиковпа Савкин лейтенантсен тата старши лейтенант Кульбит юлташăн стрелковăй подразделенийӗсене (Хӗвеланăç фрончӗ) атакăланă пулнă. Пирӗн пехотăпа артиллери гитлеровецсен икӗ ротине пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тăкнă, нимӗçсен 3 танкне персе çӗмӗрнӗ.

* * *

Капитан Кошелев тата механик-водитель Скибкин юлташсенчен тăракан танковăй экипаж пӗр çапăçура нимӗçсен 3 танкне, 7 противотанковăй орудине тата нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсене 60 çынна çити пӗтерсе тăкнă.

* * *

Белоруссири районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансем икӗ уйăх хушшинче 38 кӗпере сирпӗнтерсе янă, 17 автомашинăна пӗтерсе тăкнă тата нимӗç оккупанчӗсене çӗр çынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Партизансен пӗр отрячӗ противникран трофейăсем тытса илнӗ, çав трофейăсем хушшинче продовольстви нумай. Вăл продовольствие партизансем колхозниксене валеçсе панă.

* * *

Ленинград облаçӗн нимӗçсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен С. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ гитлеровецсен карательнăй экспедицине çапса салатнă. Çак кунсенче партизансен пӗр ушкăнӗ противникăн чугунçул çинчи составне крушени тунă.

* * *

Нимӗçсен 377-мӗш пехотнăй дивизийӗнчи 769-мӗш полкăн 10 ротинчен тыткăна лекнӗ салтак Артур Келлер çапла каласа панă: «Совет çыннисене саратма тата пӗтерсе пыма салтаксене офицерсемпе унтер-офицерсем усăнах хушаççӗ. Нумаях пулмасть фельдфебель Герц фронта килсе çитнӗ 3-мӗш взводри салтаксемпе калаçу ирттерчӗ. Гитлер славянсене çамрăккипе ваттине пăхмасăрах тата хӗрарăмпа арçыннине пăхмасăрах пӗр шеллемесӗр пӗтерсе пыма хушать, терӗ фельдфебель Герц. Малалла вăл тата çапла каларӗ: нимӗç салтакӗсем хăйсене мӗн кирлине халăхран пурне те туртса илме пултараççӗ, терӗ».

* * *

Киев патӗнчи Боярка ялӗнче нимӗçсен фашистла ирсӗрӗсем çавтери тискер ӗç туса ирттернӗ. Пӗчӗк хӗрачасене 15 çынна гитлеровецсем шкул çуртне хăваласа кӗртнӗ те темӗн тӗрлӗ тискеррӗн мăшкăлланă, кайран çав хӗрачасене телеграф юписенчен çакнă.

* * *

Казахстанра тырпулсене уйхиртен пухса кӗртме пуçланă. Уборка ӗçӗсем кунран кун сарăлсах пыраççӗ. Республикăри 5 облăçрах та 60 пин гектар тӗштырă вырнă ӗнтӗ. Джамбул облаçӗнчи чылай колхозсенче авăн çапни кăçал колхозниксем вăйлă тырпул туса илнине кăтартать.

Июлӗн 16-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июлӗн 16-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн войскăсем противника хирӗç **Воронеж** районӗнче тата **Миллеровăран** кăнтăр-хӗвелтухăçнерех вырăнта çапăçнă.

Фронтăн ытти участокӗсенче пăлхăнусемех пулман.

* * *

Воронеж районӗнче темиçе участокра пирӗн войскăсем противника хирӗç атакăлаççӗ, ăна пысăк çухатусем тӳстереççӗ. Пирӗн часть, танксем пулăшса пынипе, пӗр талăк хушшинче нимӗçсен 1.200 салтакӗпе офицерне, 8 танкне, 12 пулеметне, 7 минометне тата 9 автомашинине пӗтерсе тăкнă. Тепӗр участокра пирӗн боецсем противника пӗртак каялла чакарнă, нимӗçсен 5 танкне тата 350 гитлеровеца пӗтерсе тăкнă. Пирӗн танксен подразделенийӗ нимӗçсен пысăк соединенин штабне çапса аркатнă. Штабăн документсене тата 2 танк тытса илнӗ, темиçе çынна тыткăна илнӗ.

* * *

Хӗвеланăç фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн часть противникăн виçӗ атакине сирсе янă. Пирӗн боецсем контратака туса вăйлăн çапăçнă хыççăн пӗр çирӗплетнӗ пункта йышăнса илнӗ. Нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсене 1.000 çынна çити пӗтерсе тăкнă тата нимӗçсен 2 танкне персе çӗмӗрнӗ.

* * *

Калинин фрончӗн уйрăм участокӗсенче гитлеровецсем темиçе атака тунă, атакисем ăнăçман. Çав çапăçусенче пирӗн бронебойщиксем пысăк мастерлăх кăтартнă. Боецсем Павлов, Полянцев тата Бусыгов юлташсем кашнийӗ противникăн пӗрер танкне çунтарса янă. Унсăр пуçне вӗсем ушкăнпа персе нимӗçсен 4 танкне пӗтерсе тăкнă. Шукайло юлташ командир пулса ертсе пыракан зенитчиксем юлашки кунсем хушшинче нимӗçсен 7 бомбардировщикне персе ӳкернӗ. Пирӗн снайперсем ăнăçлăн çапăçаççӗ. Отделени командирӗ старши сержант Кушнер юлташ июлӗн 14 кунӗ хушшинче 118 гитлеровеца вӗлернӗ, унăн отделенийӗ нимӗçсен 300 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тăкнă.

* * *

Противникăн пӗр атакине сирсе янă чухне пирӗн орудин расчечӗ стройран тухнă. Артиллери батарейин командирӗ Кузьмин юлташ военкомпа, Ибрагимов юлташпа, пӗрле çав оруди патне тăнă та, унтан персе, нимӗçсен 4 танкне çӗмӗрнӗ.

* * *

Летчик-истребительсем капитан Небытов, старши лейтенант Рубцов, кӗçӗн лейтенант Хохлов тата кӗçӗн лейтенант Волков сывлăшра нимӗçсен 10 самолетне тӗл пулнă. Пирӗн летчиксем противника атакăланă та унăн 2 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Нимӗçсен 7-мӗш пехотнăй дивизийӗнчи 61-мӗш полкăн 9-мӗш ротинчи салтак Ганс Рейдер, Хӗвеланăç фронтӗнче тыткăна илнӗскер, çапла каласа панă: «Артиллерирен пӗр сехет хушши персе тăрса хăтӗрленнӗ хыççăн, эпир наступлени кайрăмăр. Вырăссем пулеметсемпе минометсенчен тăвăллăн пеме тытăнчӗç те пире çӗр çумне лапчăтса хучӗç. Ку вăл питех те хăрушă пулчӗ. Пирӗн ротăра мӗншурӗ те темиçе çын çеç чӗрӗ тăрса юлчӗ. Рота хăйӗн материальнăй чаçне пӗтӗмпе тенӗ пекех çухатрӗ. Полкăн ытти подразделенийӗсен те ӗç çавăн пекех пулнă».

* * *

Нимӗç оккупанчӗсем Орел облаçӗнчи Голышино ялӗнчи çынсене çаратса пӗтернӗ, 279 киле çӗмӗрсе пӗтерсе нимӗн юлмичченех çунтарса янă. Гитлерла бандитсем колхозăн хуçалăхри мӗншур хуралтисене пӗтерсе пăнă тата çав ялти 26 çынна асаплантарса вӗлернӗ. Гордей Васильевич Дектярев колхозникăн çемьине — унăн 64 çулти арăмне Мария Ивановнăна, 25 çулти кинне Пелагея Павловнăна тата 20 çулти хӗрне Аннана нимӗçсем штыксемпе чиксе вӗлернӗ. Христина Лаврентьевна Митичкина карчăка тата унăн ывăлӗн ывăлне, 2 çултискере, фашистла çынçиенсем подвала хупса хунă, унтан çав çурта пур енчен те вут тӗртнӗ.

* * *

Франци патриочӗсем нимӗç захватчикӗсене хирӗç хăйсене шеллемесӗр кӗрешеççӗ. Нумай пулмасть Парижра Елисейски текен хирте нимӗç майорне вӗлернӗ. Вӗлерекенни велосипедпа тарса хăтăлнă. Булонь-сюр Сен хулинче (Париж çывăхӗнческерте) икӗ нимӗç салтакӗн виллисене тупнă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончӗсенче



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Кăнтăр фрончӗ). **Укерчӗк çинче:** Пирӗн пехота, артиллеристсем пулăшнипе, фашистсем йышăннă Н. ялӗ çине наступлени тăвать.

М. АЛЬПЕРТ фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Фашистла тискер кайăксен ирсӗр ӗçӗсем

Нимӗçсен фашистла ирсӗрӗсем вăхăтлăха тытса илнӗ совет районӗсенче пирӗн граждансенчен çавтери хытă мăшкăллаççӗ, вӗсене асаплантарса вӗлереççӗ. Нимӗçсем вăхăтлăха оккупациленӗ районсен пӗр партизан фронт урлă икӗ акт илсе каçнă. Çав актсене партизансен отрячӗсен врачӗ çырса алă пуснă.

Вӗсенчен акă мӗн курăнать: майăн 16-мӗшӗнче партизансен крайӗнчи У. ятлă яла фашистсем пырса тапăннă. Июнӗн 2-мӗшӗнче партизансем çав ялта мӗн пулнине тӗрӗсленӗ чухне пӗр нӳхрепре 19 виле тупнă. Вилесенчен пӗр пайӗ выртнă, тепӗр пайӗ стенасем çумӗнче ларнă. Пӗр хӗрарăм кăкăр ачине алăра тытса ларнă çӗртех вилнӗ. Вилесем çинче сурансем пулман, ӳчӗсем кăвакарса кайнă, çăварӗсемпе сăмсисенчен юн юхнă. Çав вилесене касса пăхсан, çакă палăрнă: тымарсенче юн чăмăртанса ларман, вăл хура вишня тӗслӗ пулса кайнă. Пырсем кăмрăкланса кайнă. Çаксенчен ӗнтӗ фашистла тискер кайăксем отравляющи вещество (газ) ярса совет çыннисене вӗлерни курăнать.

У. ялӗнче 170 кил пулнă. Нимӗç карателӗсем çав яла пырса кӗрсенех кил-çуртсене вут тивертсе янă. Стариксемпе хӗрарăмсене 70 çынна касса-чиксе вӗлернӗ. 20 çынна килçуртсем çуннă чухне вут-кăвар çине пăрахса çунтарнă. Фашистсем пӗр ишӗлсе аннă çурт патне У. ялӗнчи 19 çынна илсе пынă та нӳхрепе кӗрсе ларма приказ панă, унта кӗрсе ларнă çынсене вара газ ярса вӗлернӗ.

Фашистла мерзавецсем газ янипе çак çынсем асапланса вилнӗ: Ф. К. Касенков — 60 çулта, Д. Н. Касенкова — 58 çулта, Е. Ф. Касенкова — 15 çулта, П. Ф. Касенкова—12 çулта, Е. Ф. Касенкова—7 çулта, А. Ф. Касенков — 2 çулта, У. П. Касенкова — 40 çулта, Т. Касенкова — 7 çулта, А. Касенков — 2 çулта, З. А. Тивкин—70 çулта, М. Е. Ковалева — 60 çулта, Е. Т. Солдатенко — 60 çулта, К. З. Харитонова — 55 çулта, П. Харитонова — 15 çулта, А. [illegible] Ковалева — 35 çулта, А. З. Ковалев — 10 çулта, И. К. Кириченков — 70 çулта, тата И. З. Ковалев — 8 уйăхра.

У. ялӗ халӗ çук. Ăна пӗтӗмпех фашистла тискер кайăксем çунтарса янă. Унти çынсене асаплантарса вӗлерсе пӗтернӗ. Çакăншăн, совет çыннисене асап кăтартнăшăн фашистла ирсӗрсене хытă тавăрас пулать. Нимӗç оккупанчӗсене — вилӗм!

И. СТОЛЯРОВ.
Иккӗмӗш рангри военврач.
Действующи арми.

Пирӗн земляксем

Çӗршывăн шанчăклă ывăлӗ

Шкул сакки çинче ларса географи вӗреннӗ ачасен вăрçă кунӗсенче чылайӗшне куçпалах курмалла пулчӗ.

Михаил Черкесов халӗ шкул сакки çинче ларса вӗренекен, улăхра чечексем пухса çӳрекен ача мар ӗнтӗ; вăл—социализмлă çӗршывăн хӗрлӗ воинӗ. Çак таса ята вăл вăрçă пуçланнă кунсенчен тытăнсах çӗнтерӳ ялавӗ пек илсе çӳрет.

1941 çулти июнӗн 22-мӗшне Черкесов асра тытать. Ун чухне пирӗн çине нимӗç вăрçăпа тухрӗ. Вăл пирӗн кунçулăн хуçи пулса тăрасшăнччӗ. Вăл санăн пурнăçупа, санăн кил-çуртупа, çемьепе хуçа пулса тăрасшăнччӗ. Вăл сана ӗмӗрлӗх чура — ӗç выльăхӗ тăвасшăнччӗ. Вăл сана хăвăн аçусен чӗлхине, пухăшлама, ӗмӗтленме вӗреннӗ тăван чӗлхене, чи пирвайхи юрату чӗлхине вӗрентесшӗнччӗ, унтан вара эс ют чӗлхене епле хуçкаласа калаçнинчен кулса пурăнасшăнччӗ.

Анчах тискер тăшмана хирӗç нумай миллионлă совет халăхӗ паттăррăн çӗкленчӗ. Тăван халăхпа пӗрле Черкасов та, малтанах Хӗрлӗ Çар ретӗнче пурăнаканскер, фашистла варварсене хирӗç арăслан пек çапăçма тытăнчӗ. Мӗн чухлӗ хӗрӳллӗ çапăçусенче пулман пуль вăл...

Акă окопра. Черкесов малалла çапăçма кайма приказ парасса кӗтсе выртать. Çурçӗрти пăрлă океанран пуçласа Хура тинӗс таран темиçе миллион боецсем, Черкесов пекех, тăшмана пӗтерсе тăкас кăмăлпа пурăнаççӗ.

Черкесовăн вăрçăри хӗрӳллӗ ӗçӗсем çинчен çырса кăтартас пулсан, пысăк кӗнеке те çырма пулать. Пӗлтӗрхи июнь, декабрь уйăхӗсем-и, кăçалхи май уйăхӗ-и, — пурпӗрех ун пурнăçӗнче пархатарлă. Час-часах аса илет вăл пӗлтӗрхи июнӗн 29-мӗшне. Ун чухне Хӗрлӗ Çар, тăшмана пысăк çухатусем кӳрсе, каялла чакса пыратчӗ.

Гаубичнăй артполкри артиллеристсем хӗрӳллӗ çапăçу пуçланасса кӗтнӗ. Взвод командирӗ кӗçӗн лейтенант Черкесовпа красноармеец-разведчик Жулай противник вырнаçса тăнă çӗре разведка тума кӗрсе каяççӗ. Вӗсем фашистсен минометнăй тата противотанковăй батарейисем, пулемет точкисем, наблюдательнăй пункчӗсем ăçта вырнаçса тăнине тупаççӗ те, хăйсен батарейине пӗлтерсе тăшман çине пертереççӗ.

Гаубичнăй полк батарейин малтанхи залпӗсем нимӗçсен пулемечӗсене, батарейисене, наблюдательнăй пункчӗсене пӗтӗмпех пӗтерсе тăкнă. Çапăçу хирӗнче вăрă-хураксен сӗрӗшер виллисем тăванса выртнă.

Каç та çывхарса çитнӗ. Анчах та Черкесовпа Жулай çавăнтах юлма шутланă: тăшманăн вăйӗ çинчен пӗлтерсе тăмалла çке! Анчах вӗсене нимӗçсем çавăрса илеççӗ. «Тем пулсан та нимӗçсене чӗррӗн парăнмастпăр», — шутлашнă хăй ăшӗнче Черкесов.

— Русс, сдавайся! — кăшкăрнă нимӗç салтакӗ.

Икӗ маттура вилӗм хăратайман. Вӗсем нимӗçсем çине пӗр вӗçӗмсӗр гранатăсем вăркăнтарнă. Черкесов умне темиçе нимӗç сиксе тухнă, вăл вӗсене штыкпа чиксе пăрахать. Нимӗçсен речӗ сайралланнăçемӗн сайраланса пынă.

— Русс, сдавайся! — каллех çуйăхнă ӳсӗр нимӗçсем.

Юлашки гранатăсене ывăтса, пирӗн паттăрсем темиçе нимӗçе пӗтерсе тăкаççӗ. «Е пурнăç е вилӗм», — çакă вӗсен асӗнчен тухман. Хупăрласа илнӗ нимӗçсене пӗтерсе тăкса, икӗ герой хăйсен чаçне таврăнаççӗ.

— Мухтав сире, тăшмана хирӗç çавăн пек кӗрешмелле! — тенӗ вӗсене политрук.

Черкесов нумай çапăçусенче пулнă, анчах шывра та путман, вутра та çунман. Вăл час-часах иртнӗ кунсене аса илет.

Аса илет вăл хăй чухăн хресчен çемьинче çуралнă Балдай (Етӗрне районӗ) ялне. Аса илет аншӗ империализмлă вăрçăра вилни çинчен амăшӗ каласа кăтартнине. Аса илет хăйне амăшӗ пек лăпкаса ӳстернӗ тăван çӗршыва, ачасен çуртне...

— Тул çутăлать. Пурнăç тул çутăлас умӗнхи сехетри пек нихăçан та чаплăн туйăнмасть.

Çапла, Черкесовăн та, кирек камăн та, пурăнас килет. Таталлă çӗнтерӳ курас килет. Пурнăçа пурте юратаççӗ. Пурнăçшăн çапăçăва кӗрет Черкесов та. Чуралла пурнăçшăн мар, ирӗклӗ пурнăçшăн çапăçма каять. Хăйӗн ватă амăшӗн телейӗшӗн, ачисен телейӗшӗн çапăçма каять вăл.

Вăл амăшӗпе, Етӗрнери спирт заводӗнче ӗçлекенскерпе, çыхăну тытсах тăрать. Иртнӗ кунсенче Михаил Черкесов амăшӗ патне çакăн пек çыру янă... «...Анне, эпӗ тăшмана хирӗç яланхи пекех паттăррăн çапăçатăп. Правительство мана Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградăларӗ...»

Хӗрлӗ Ялав орденӗ илнӗ пирӗн землякăн Михаил Черкесовăн амăшӗ Пелагея Мышкина заводра стахановка шутланать, хăйӗн нормине 300 процент таран тултарса пырать.

ЯКОВ СИГАП.

РЕСПУБЛИКĂН УЙХИРĔСЕНЧЕ

Тырă вырмалли машинăсене икшер смена ĕçлеттермелле тунă

КАНАШ, июлĕн 15-мĕш. (Телефонпа.). Районри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленсе çитрĕ. Колхоз кăçал тĕштырăсене тата пăрçапа кĕрпе йышшипе культурăсене пурĕ 945 гектар çинчен пухса кĕртмелле. Тырăсене колхоз пуринчен ытла машинăсемпе вырма хатĕрленет, ĕçе пикăçанчченех те йĕркелентерех туса ирттерсе, тырăсене пĕр тăкаксăр пухса кĕртме шутлать.

Тырăсене пухса кĕртес ĕçре колхозăн 6 бригада ĕçлемелле. Кашни бригадăран икшер звено организациленĕ, вĕсене уйрăм участоксем сумне çирĕплетнĕ. Тырă вырас, çапас, кĕлте турттарас тата ытти çавăн пек ĕçсенче колхозра пурĕ 285 çын ĕçлемелле. Вĕсемсĕр пуçне, кĕлте çыхас, пучах пухас тата ытти вакăрах ĕçсене шкул ачисемпе ватă колхозниксем те хутшăнаççĕ.

Колхозăн 72 лаша, тырă вырмалли машинăсем виççĕ. Паянхи куна кашни лаша валлиех урапа тата кӳлмелли япаласем юсаса хунă, тырă вырмалли машинăсемпе туллин усă курас шутпа вĕсене талăкра икĕ сменăпа ĕçлеттерме палăртнă. Çавăнпа тырă вырмалли кашни машинăпа ĕçлеме тăватшар лаша уйăрнă, икшер машиновед вĕрентсе хатĕрленĕ тата машина хыççăн вырнă тырра пуçтарса пыма 25-шер çын уйăрса çирĕплетнĕ. Ĕçе çакăн пек организациленипе, тырă вырмалли виçĕ машинĕпе икшер смена ĕçлесе, колхоз кашни кунах 48-шар гектартан кая мар тырă вырса пуçтарма шутлать. Çапла, колхоз кĕрхи тырăсене 10 кунран вăрăма ямасăр, çуркки тырăсене 12 кун хушшинче пĕтĕмпех пухса кĕртсе капана хывма шутлать. Ку ĕçсене йĕркеллĕн туса пыма колхоз ĕç планĕ — графикĕ тунă.

Колхоз машинăсене ĕçе хатĕрленипе пĕрлех тырра алăпа вырма та хатĕрленет. Июлĕн 10-мĕш тĕлне кĕрепленллĕ çавасем 32 туса хатĕрленĕ, колхозницăсем çурласем хатĕрлеççĕ. Колхозниксем тырă вырнă вăхăтра 16—20-шер сехет ĕçлеме пулаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче пысăк вăй хурса ӳстернĕ пуян тырпула вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕме хатĕрленеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Совет Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени ырласа йышăнчĕç. Ăна тĕплĕн пурнăçлама пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме шулчĕç.

Ф. МАЛЫШКИН.

Тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕç районра çителĕксĕр пулса пырать

ÇĔМĔРЛЕ, июлĕн 15-мĕш. (**«Чăваш Коммуни» корр., телефонпа**). Район утă çулма косилкăсене юсаса çитерме сĕрех тухнă. Чылай колхозсенче утă çулмалли машинăсем юсавлă мар пулнипе усĕсĕр лараççĕ. Çавăн пекех тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хатĕрленесси те çителĕксĕр пулса пырать. Районра тырă вырмалли машинăсем 116, июлĕн 10-мĕш тĕлне вĕсенчен 44-шне çеç юсанă, тырă çапмалли тата сортламалли машинăсене тата кĕреплесене юсас ĕç пачах та çителĕксĕр пулса пырать. Ялхуçалăх машинисене юсама пур майсем те пур пулсан та, хăшпĕр колхозсем ку ĕçе паян тăвас чухне ырана хăвараççĕ. Çавăнпа та тырпула пухса кĕртес ĕçе районра 2—3 колхоз кăна хатĕрленсе çитнĕ-ха.

Мăн Улхашри «Красноармеец» колхоз (председателĕ Столбов юлташ) çурлакипе лайăх туса ирттернĕ. Çавăн хыççăн ăна районри руководительсем те, канашлусенче те пĕрре кăна мар ырланă. Çавна пула Столбов юлташ та тата колхозăн бригадирĕсем те лăпланса ларнă. Ку колхозра тырă вырмалли машинăсем 14, паянхи куна вĕсенчен тăваттăшне çеç юсанă, молотилкăсене (вĕсен шутĕнче икĕ сложнăй молотилка) юсама пачах та тытăнман. Тырăсене вырма кĕрепленллĕ çавасем алла çити кирлĕ, анчах 5 çава çеç тунă-ха. Çавăн пекех тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕç Вăрман Тăванти «Самолет», Улхаш ялсоветĕнчи «Лесной огонек» тата ытти хăшпĕр колхозсенче те начар пулса пырать. Вĕсем те ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе кая хăварса пыраççĕ, кĕрепленллĕ çавасем тума пачах тытăнман.

«Лесной огонек» колхозра 4 жнейка. Вĕсенчен иккĕшĕ çеç ĕçе юрăхлă. Юлашки вăхăтра кунта колхозниксен ĕç дисциплини япăхланни сисĕнет. Утă çулма палăртнă колхозниксенчен ĕçе 50—70 проценчĕ çеç тухаççĕ. Çапла пулсан та, колхоз правленийĕ ĕç дисциплинине çĕклес тĕлĕшпе нимĕнле мерăсем те йышăнман.

Юлашки вăхăтра ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ колхозсене тырпулсем пухса кĕртме хатĕрлес тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсене туса ирттерчĕç. Колхозсене ĕçре пулăшса ертсе пыма хăйсен представителĕсене ячĕç. Анчах паянхи кун та ĕçре улшăну пулни сисĕнмест-ха.

Партин районри активĕн, çĕрĕç пайĕнче ĕçлекен работниксен, партин колхозсенчи пуçламăш организацисен секретарĕсен тата комсомолецсен колхозсене тырă пухса кĕртме хатĕрленес ĕçре çирĕп пулăшу памалла—уборкăна тĕплĕн хатĕрленсе çитсе организованно тухмалла.

Х. ЛИСИН.

Государствăна утă параççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, июлĕн 15-мĕш. (**Хамăр корр.**). Районри колхозсенче утă çулас ĕç вăйланса пырать. Нумай колхозсем утă типсе пынă май ăна капана хывиччĕнех государствăна леççе параççĕ. Çак кунсенче Турханти «Комбайн» колхоз государствăна 25 центнер паха утă леççе пачĕ. Молгачкинăри «Çамрăк вăй» колхоз тата Мăн Улхаш ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз та хатĕрлев пункчĕсене вуншар центнер утă леççе панă. Государствăна утă çийĕнчех парас ĕç районра вăйланса пырать.

Çилос хыврĕç

Алма-Ата облаçĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе каланине Ямашкассинчи (Канаш районĕ) Дорохин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем ĕçпе ответлеççĕ.

Вĕсем çамрăк выльăхсене пурне те тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтерме обязательство илнĕ. Анчах та çак выльăхсене тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтерес тесен, вĕсем валли çителĕклĕ тăран апат-çимĕç хатĕрлемелле. Дорохин ячĕпе тăракан колхоз выльăхсен продуктивноçне ӳстерес тесе кашни çулах утă, силос, тымарçимĕçсем нумай хатĕрленĕ. Кăçал та колхоз выльăхсем валли апат-çимĕç нумай хатĕрлет. Çак кунсенче вăл 50 тонна силос хыврĕ. Часах ытти йышши апатсем те хатĕрлеме тытăнаççĕ.

И. МАКСИМОВ.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ. Выльăхсене хĕл каçарма çителĕклĕ тăран апат хатĕрлес майпа районри чылай колхозсем силос хатĕрлеме тытăнчĕç. Пĕчĕк Маклашкинăри «Красная Армия» колхоз 25 тонна, Малти Чиперуйри Урицкий ячĕпе тăракан колхоз 23 тоннăна яхăн силос хывнă. Силос хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксем хаваслă те хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Комсомолецсем силос хывнă çĕрте

СОВЕТСКОЕ, июлĕн 15-мĕш. (**Телефонпа**). Районри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем выльăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апат хатĕрлес ĕçре активлăн ĕçлеççĕ. ВЛКСМ Обкомĕ организациленĕ çирĕмкунлăхра районри колхозсенче комсомолецсемпе çамрăксем тимлĕн ĕçленипе 2675 тонна силос хывнă.

Июлĕн 12-мĕшĕнче, вырсарникун, колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем силос хывас тĕлĕшпе тата ялхуçалăх машинисен запаслă пайĕсене пухас енĕпе воскресник туса ирттерчĕç. Вăл кун силос хывас ĕçре комсомолецсемпе çамрăксем тата пионерсем пурĕ 347 çын ĕçлерĕç, 1959 тонна силос хыврĕç, ялхуçалăх машинисен тĕрлĕрен пайĕсене 1240 штука пухрĕç.

Л. ИВАНОВ.

Плана çуррине çеç пурнăçланă

ШĂХАСАН, июлĕн 15-мĕш. (**Телефонпа**). Районри колхозсен кăçал общественнăй выльăх-чĕрлĕх валли 4500 тонна силос хывса хăвармалла. Паянхи куна районра пĕтĕмпе 2200 тонна çеç хывнă. Силос хатĕрлес ĕçе хăшпĕр колхозсем тимлĕн туса пыраççĕ. Шуркассинчи «Борец» колхозăн план тăрăх 25 тонна силос хывмалла пулсан, паянхи кун кунта 39 тонна хывнă, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 50 тонна, «Большевик» колхоз 30 тонна хывнă. Силос хывас ĕç Тури Сурăм ялсоветĕнчи колхозсенче те аван пулса пырать. Кунта «Заря» колхоз 75 тонна, «Красное Сормово» 45 тонна хывнă. Асăннă колхозсем силос хывас плана ытлашшипех пурнăçланă.

Чылай колхозсем çулçăллă апат хатĕрлеме тытăннă. Паянхи куна çулçăллă апат районра пурĕ 5 пин лав хатĕрленĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз çамрăк выльăхсем валли пурĕ 2 тонна çулçăллă апат хатĕрленĕ.

Анчах та силос хывас ĕçе хак паман колхозсем те пур-ха. Чулкăмака ялсоветĕнчи «Память Ильича», Ентриялĕнчи «Герой» колхозсем иртнĕ çулсенче 40—70-шер тонна силос хывса хăварнă. Колхоз руководителĕсен тимсĕрлĕхне пула вăл силоспа усă курман. Çавна пула кăçал силос хывас ĕçе кунта пуçăнман та.

С. ШАДИН.

РАЙОНРИ ХАÇАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНИ

Ăмăрту тулашĕнче

Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнчи приказра лартнă аслă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн пирĕн çĕршывра социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Промышленноçри рабочисем—хамăрăн геройла Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшалсемпе боеприпассем, танксемпе самолетсем ытларах туса кăларассишĕн, колхозниксемпе колхозницăсем—çĕршывпа фронта ытларах тырпул, чĕртавар, сĕт-çу туса парассишĕн ăмăртаççĕ.

Массăсене кĕрешĕве мобилизацилес, уйрăмах социализмлă ăмăртăва организацилес ĕçре пирĕн большевикла пичет яланах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Пичет—массăсен организаторĕ.

Анчах хăшпĕр районсенчи хаçатсем хăйсен хисеплĕ те ответлă ĕçне кирлĕ пек туса пыраймаççĕ-ха.

Çапла, Комсомольски районри «Октябрь ялавĕ» хаçат, çиелтен пăхсан, ăмăртăва организацилес тĕлĕшпе ĕçлемест темелле мар. Вăл хăйĕн пĕрле тухнă 48-мĕшпе 49-мĕш номерĕнче колхозсем Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăнмалли условисене пичетлесе кăларнă. Унтан икĕ номер сиктерсе (52-мĕш номерте) Асанкассинчи «Двигатель революции» колхоз председателĕн Калашников юлташăн «Ăмăртăва хутшăнчĕç» ятлă статьине панă. 54-мĕшпе 55-мĕш номерте «Ударник» колхоз çуракинче мĕнле ĕçлени çинчен ялсовет председателĕн А. Кушманов юлташăн заметкине пичетленĕ. Çав номерĕн умстатьинче те пĕр вырăнта Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту çинчен кăштах асăнса хăварнă. Çакă кăна!

«Двигатель революции» колхозпа «Ударник» колхоз—районра маларах тăракан колхозсем. Вĕсенчен пĕррремĕшĕ ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çӳрекен ялавне илнĕ. Вĕсен ĕçне палăртни кирлĕ. Анчах районри ытти вуншар колхозсем мĕн тăваççĕ? Мĕнле хутшăнаççĕ вĕсем ăмăртăва? Хаçат кун çинчен нимĕн те шарламасть.

Комсомольски районри хаçат редакцийĕ çакна ăнланса илеймен: колхозсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн тĕп задачи вăл—вăйлă тырпулшăн, йышлă та пысăк тупăшлă выльăх-чĕрлĕхшĕн пыракан Пĕтĕм Союзри ăмăртăва малта тăракан колхозсене çеç мар, кашни колхоза, кашни бригадăна, фермăна, кашни колхозникпе колхозницăна хутшăнтарасси пулса тăрать. Ку вара малта пыраканнисем çинчен кăна çырас ĕçрен чылай йывăртарах. Кунта вара ăмăрту мĕнле пынине пăхса тăни мар, ăмăртăва организацилени кирлĕ. Хаçат организатор пулма тивĕçлĕ.

Елчĕк районĕнчи «Колхоз ялавĕ» хаçат вара пачах та ăмăрту тулашĕнче юлать. Хаçат июнĕн 18-мĕшĕнче колхозсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсене пичетлесе кăларнă та çакăн хыççăн ăмăрту çинчен паянхи куна çитсе пĕр материал та паман. Хаçатра час-часах районри работниксен статьисем пичетленсе тухаççĕ. Çапла, хаçатăн 49-мĕш номерĕнче парти райкомĕн пропагандисчĕн Е. Крылова юлташăн «Сĕнтерӳ тăвас тесен, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле» ятлă статьи пичетленнĕ. Кунта Крылова юлташ колхозсенчи агитаци ĕçĕ çинчен çырать, анчах çак ĕçе хальхи вăхăтра социализмлă ăмăрту ыйтăвĕпе çыхăнтарма кирлине кăтартса памасть.

Ăмăрту условийĕсем пичетленсе тухнă хыççăнах «Колхоз ялавĕ» хаçат районри коммунистсен пухăвĕ, райсоветăн сессийĕ тата комсомол райкомĕн пленумĕ пулса иртни çинчен икĕ номерте пысăк информацисем панă. Анчах хаçатри информацисем тăрăх пăхсан, коммунистсен районри пухăвĕ те, райсовет сессийĕ те, комсомол райкомĕн пленумĕ те хальхи вăхăтра пĕтĕм çĕршыва çĕклентерсе пыракан социализмлă ăмăрту çинчен нимĕн те шарламаççĕ.

Тен, районри организацисем социализмлă ăмăртăва организацилес енĕпе чăнах та нимĕн те тумаççĕ?! Апла пулсан, кунта хаçатăн хăйĕн чи малтан сасă памалла. Анчах хаçат, социализмлă ăмăрту тулашĕнче тăракан-скер, районри чылай колхозсем хальхи вăхăтра мĕн ĕçленине курмасть. «Колхоз ялавĕ» хаçат июнĕн 28-мĕшĕнче тухнă номерте «Колхоз уйхирĕсенче» текен отдел кăларнă. Кунта ĕнтĕ колхозсен ăмăртăвĕ çинчен сăмах хускатмасăр иртсе кайма çук пек, анчах вăл кунта та ăмăрту ыйтăвĕнчен пăрăнса иртсе кайнă.

Эпир уйхирти социализмлă ăмăртăвăн иккĕмĕш тапхăрне —ялхуçалăх çулĕн анăçлăхне татса паракан чи ответлă тапхăра кĕретпĕр. Районри хаçатсен тырпула пухса кĕртес ĕçĕн хĕрӳллĕ тапхăрĕнче малтан пулнă йăнăшсемпе çитменлĕхсене тӳрлетмелле. Вĕсен уборкăра социализмлă ăмăртăвăн чăн-чăн организаторĕсем пулса тăмалла.

Театр ăсталăхне вĕренекенсен йышăнче

Мускаври А. В. Луначарский ячĕпе тăракан театр ăсталăхĕн институтĕнче (ГИТИС-ра) вĕренекен чăваш студенчĕсем çак кунсенче хăйсен иккĕмĕш вĕренӳ çулне вĕçлесе çитереççĕ.

Пулса иртнĕ экзаменсемпе зачетсем студентсем мĕнпур вăй-халпа тăрăшса вĕреннине лайăх кăтартса параççĕ. Сăмахран, çар ĕçне вĕреннĕ предметпа пулнă экзаменра студентсем пурте «отлично» илнĕ. Малашне сцена çинчи сăмахăн ăсталăхĕ, вырăс чĕлхи тата ытти предметсемпе экзаменсем пулаççĕ.

Хальхи вăхăтра Искусствăсен управленийĕ институтри чăваш студенчĕсен йышне нумайлатас тĕлĕшпе ĕçлет. Актер пулас текен çамрăксенчен кулленех заявленисем, çырусем килеççĕ.

Кăçал института чăвашсенчен арçын ачасене çеç илеççĕ, мĕнпурĕ 15 çын илмелле. Вăтам шкулăн 8-мĕш—10-мĕш класĕсенче, педучилищĕре т. ыт. вăтам шкулсенче вĕренекенсенчен, çичĕ класс пĕтернĕ хыççăн колхозсенче, предприятисенче ĕçлекенсенчен, ялти е хулари драмкружоксенче ĕçлекен юлташсенчен, кĕскен каласан—театр ăсталăхне чĕререн юратакан чăваш çамрăкĕсенчен пухăнса çитмелле института кĕрес текенсен çĕнĕ ушкăнĕ.

Пирĕн партипе правительство совет искусствинче ĕçлеме хатĕрленекен çамрăксене пур тĕлĕшрен те питĕ паха условисем туса панă. Театр институтĕнчи чăваш студенчĕсене вĕреннĕшĕн укçа тӳлессинчен хăтарнă, вĕсене стипенди парса тăраççĕ, вĕрентессе совет искусствин чи паллă мастерĕсем вĕрентсе пыраççĕ.

Чăваш студенчĕсен ушкăнĕ иртнĕ хĕле Шупашкарта вĕренсе ирттерчĕ. Малашне вĕсем, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусствăсен Комитечĕ кăтартса панă тăрăх, Институтăн мĕнпур йышĕпе пĕрлешсе ĕçлеме тытăнаççĕ.

Института вĕренме кĕрес текен чăваш çамрăкĕсен августăн 1-мĕшне Шупашкара çитмелле. Августăн 1—3-мĕшĕсенче вĕренме илес тĕлĕшпе тĕрĕслевсем пулса иртеççĕ.

Фашистла Германин урнă йыттисем хăйсем вăхăтлăха йышăнса илнĕ вырăнсенче культурăпа искусствăн мĕнпур учрежденийĕсене çĕмĕрсе тăкаççĕ, вĕсем ирĕке юратакан халăхсене сĕмтĕттĕмлĕхре тытса усрасшăн. Пирĕн искусство, Ленинпа Сталинăн хĕвеллĕ ялавĕ айĕнче ӳссе çитĕннĕскер, хăйĕн вăй-халне, хастарлăхне çӳлĕрен çӳлерех çĕклет, фашистла вăрă-хурахсене 1942 çулта тĕп тăвас тĕлĕшпе пыракан кĕрешӳре паллă вырăнта тăрать. Пирĕн çĕршывра çĕнĕ театрсем, ансамбльсем, искусствăн ытти организацийĕсем шăтса ӳсеççĕ. Театр Институтĕнче вĕренекен чăваш студенчĕсен ушкăнĕ—çав организацисенчен пĕри.

ДЕТСАД ОРГАНИЗАЦИЛЕРĔÇ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Çак кунсенче хулара татах тепĕр детсад ĕçлеме пуçларĕ. Унта отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенчи боецсен çемьисен ачисем, пĕтĕмпе 75 ача, çӳреççĕ.

Садра ачасене çитерме апат-çимĕç çителĕклĕ, инвентарьсем те кирлĕ чухлех пур. Ачасем—иртен пуçласа каçченех детсадра, вĕсен амăшĕсем—производствăра ĕçлеççĕ.

Шкул ачисен ĕç отрячĕсем

ТĂВАЙ. Тĕмерти вăтам шкулта вĕренекенсемпе учительсем хăйсен çуллахи канӳ вăхăтне колхоз производствинче активлăн ĕçлесе ирттереççĕ. Вĕсем вĕренӳ çулĕ пуçлансанах отрядсене организацилесе, сывăхри «Комсомолец», «Майăн 1-мĕшĕ», «Хурçă» тата ытти колхозсен уйхирĕсене ĕçлеме тухнă. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, вĕсем малтанхи кунсенчех паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Сысоев, Алексеев, Васильев вĕренекенсем ĕç нормине тăтăшах ирттерсе тултарса пыраççĕ.

Г. КАЧИЛОВ.

Тырпула выльăхсем таптаççĕ

Шăмăршă районĕнчи Вăтакас Кипеч ялĕнче уй картисемпе укăлча картисем юсавлă мар. Хăшпĕр тĕлте картасем ишĕлсе аннă. Çавна пула кăçсерен кĕтӳ кĕртсен, выльăхсем уйри тырпул çине тухаççĕ. Тырпула таптаса ватса пĕтереççĕ. Апла пулин те, колхоз правленийĕ нимĕн те тумасть.

Ют çĕршывсенче

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Виши хушшинчи калаçусем çинчен Уэллес калани

ВАШИНГТОН, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕн заместителĕ Уэллес пичет представителĕсемпе калаçнă чухне çапла каланă: Рузвельт Виши правительствине Францин Александрире тăракан çар карапĕсене кĕвеланăç çурчăмăрĕнчи портсене илсе пыма икĕ хутчен сĕннĕ, анчах Виши правительстви çав сĕнӳсене йышăнман.

Рузвельт малтан çапла тума сĕннĕ: çав карапсем вăрçă пĕтиччен Америкăри портсенчен пĕринче е Америкăри пĕр-пĕр нейтральнăй çĕршывăн портĕнче тăччăр, тенĕ, вăрçă пĕтнĕ хыççăн вĕсене вара Франци халăхне таварса пама пулать, тенĕ. Унтан Рузвельт çакăн пек сĕнӳ панă: Франци карапĕсем Александрирен Суэц каналĕ витĕр тухса, Африка таврра çаврăнса, Мартиника утравĕ патне пычччăр, унта вĕсене вăрçă пĕтиччен хĕçпăшалсăр тăратса хăвармалла, вĕсене хальхи вăхăтра çав утрав патĕнче тăракан карапсене хĕçпăшалсăрлатнă условисемпех хĕçпăшалсăрлатмалла, тенĕ. Çавăн пек сĕннĕ чухне икĕ хутĕнче те Рузвельт Вишине—Англия вăл карапсене Александрирен пĕр хăрушлăхсăр илсе кайма ирĕк парать, тесе шантарса каланă.

Уэллес çакна палăртса панă: Рузвельт Францин çар карапĕсем Александрире тăни чухне вĕсем тăшман Александри çине пырса тапăнас хăрушлăхра тăраççĕ тесе шухăшласа çавăн пек тума сĕннĕ. Уэллес малалла çапла каланă: çав çар карапĕсен лару-тăрăвĕ ытла та шанчăксăр, мĕншĕн тесессĕн Франципе Германи хушшинче тунă перемири условийĕсенче ун пек лару-тăру çинчен каламан. Вăл карапсем Александрире Франци Англи союзникĕ пулнă чухне Англипе Франци хушшинче тунă килĕшӳ тăрăх тăнă. Анчах Виши правительстви çав сĕнӳсене йышăнман, вăл çав карапсене Францин пĕр-пĕр сывăхри портне илсе кайма ирĕк пама ыйтать. Уэллес çакна май çапла каланă: ку вăл Виши правительстви Мартиника утравне чи сывăхри портсенчен пĕри тесе шутламаннине, çапла вара ăна Германипе Итали контрольлĕсе тăракан утрав тесе шутламаннине пĕлтерет, тенĕ.

Франци карапĕсем Суэц каналĕ витĕр тухма килĕшмен пирки англичансем вĕсене путарас пулсан, англичансем тĕрĕс тăвĕç-и? тесе ыйтнине хирĕç: тĕрĕс тăвĕç, тесе ответленĕ. Çак ыйту тĕрăх дискусси пĕтсе ларнă тесе шутлатăн-и? тесе ыйтнине хирĕç Уэллес çапла каланă: Виши правительстви ку ыйту çинчен тата тепĕр хут шухăшласа пăхĕ тесе шанатăп эпĕ тенĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ФРАНЦИРЕ ХУÇАЛАННИН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). «Форейн коммерс Уилки» журнал çапла çырать: нимĕçсем Франци хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те хуçаланни Францин промышленноçĕпе ялхуçалăхне 1941 çулта хытă пырса çапнă. Францире чĕртавар, çĕркăмрăкĕ нефть тата продовольстви питĕ нумай çитменни кунсерен ытларах та ытларах палăрса пырать, транспорт хатĕрĕсем чакса пыраççĕ тата транспортри йывăрлăхсем ӳснĕçемĕн ӳсеççĕ. Франци промышленноçĕн 60—80 проценчĕ Германи валли ĕçлет. Искусственнăй удобренисем, топливо, ĕç выльăхĕ тата ĕçлекен çынсем çитменнипе ялхуçалăхĕ те юхăнса пырать. Çын çитменни вăйпитти хресченсенчен нумайĕшĕ Германире тыткăнра пурăннинчен килет. Çитĕнекен тырă, сахăр кăшманĕ тата çĕрулми халăха питех те пĕчĕк нормăсем тăрăх продовольстви парса тăма та çитмест. Кунсăр пуçне тата Францие тĕрлĕ зонăсем çине уйăрни тата транспорт хатĕрĕсем сахалли хăшпĕр районсенче продовольстви çитменнине пушшех çивĕчлентерсе яраççĕ.

Францире тухакан хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Францире 1941 çулăн пуçламăшĕнче промышленность туса кăларнă продукци 1928 çулти продукцин 50 проценчĕ çеç пулать, 1941 çулта Францире кашни уйăх хушшинче 2.800.000 тонна çĕркăмрăкĕ кăларнă, вăрçăччен кашни уйăхра 4.000.000 тонна кăларнă пулнă, Францие хăйне уйăхсерен 6.000.000 тонна çĕркăмрăкĕ кирлĕ.

Бензин çитменни сăмăл тата грузовой автомашинăсемпе усă курассине питĕ нумай чакарнă. 1942 çулăн пуçламăшĕнче Виши правительствин промышленность производствине пăхса тăракан статс-секретариачĕн представителĕсем Францире бензин запасĕсем пĕтни çинчен пĕлтернĕ. Сĕрмелли çусем çитменнине пула чугунçулсем тăрăх çӳресси чакнă.

Пир-авăр промышленноçĕ валли Францие чĕртавар илсе пыма чарăннă. Францире хăйĕнче çĕм промышленность ыйтнин 5 проценчĕ чухлĕ, пурçăн — 2 проценчĕ чухлĕ, йĕтĕн — 40 проценчĕ чухлĕ çеç тăваççĕ.

Хальхи вăхăтра хурçă вăрçăччен тунă хисепĕн 30—35 проценчĕ чухлĕ çеç тăваççĕ.

Францин автомобиль тăвакан промышленноçĕ халĕ Германи валли çеç ĕçлесе тăрать.

Итальянецсемпе нимĕç оккупанчĕсем Югославире тунă тискер ĕçсем

ЖЕНЕВА, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). Итальянецсемпе нимĕç оккупанчĕсем Югослави халăхне тискеррĕн тыткалаççĕ, уйрăмах та вĕсем тыткăна лекнĕ тата аманнă партизансене хытă асаплантараççĕ. Çапла, акă, июнĕн пуçламăшĕнче Гацко хули сывăхĕнчи Извор ялĕнче итальянецсен сынвĕлерен ĕçсем аманнă партизансем выртнă госпитале вут тивертсе çунтарса янă. Аманнă партизансем пурте çунса кайнă. Гатăга итальянецсемпе нимĕçсем ирсĕрĕсем хăйсем патне тыткăна лекнĕ медицина сестрисене асаплантарнă. Юнпа пĕвеннĕ, ăнсăр выртнă сестрасене вара персе вĕлернĕ. Итальянецсемпе нимĕç оккупанчĕсем Югославири мирлĕ халăха та тискеррĕн тыткалаççĕ. Гроцки уездри Мали Пожаревац ятлă ялта вĕсем партизансене пулăшнăшăн 47 хресчене персе вĕлернĕ. Сопот ялĕнче итальянецсем темиçе киле вĕсенче ларнă хресченсемпе пĕрлех çунтарса янă. Белград полицийĕн начальникне тата Панчево хулинче нимĕç полицейскине вĕлернĕшĕн 150 заложнике персе пăрахнă.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: июлĕн 14-мĕшĕнче Англи истребителĕсем Çурçĕр Францири чугунçул çине тата пĕр аэродром çине вĕçсе пырса тапăннă. Çав кунхи каçах истребительсем Остенде сывăхĕнче противникăн пысăк мар виçĕ суднине атакăласа çунтарса янă.

Египетри çапăçусем

ЛОНДОН, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июлĕн 14-мĕшĕнче фронтăн çурçĕр участокĕнче пысăк ĕçсемех пулман, каç пулсан çеç тăшманăн танкĕсемпе пехоти Англин Тель-Эль-Эйза сывăхĕнчи войскисен малта тăракан куралĕсене атакăланă. Çапăçусем халь те пыраççĕ. Фронтăн вăтаçĕртипе кăнтăрти участокĕсенчи войскăсен активлăхĕ пысăк пулман.

Июлĕн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле вăтам бомбардировщиксем Тобрука атакăланă. Тобрукра пушарсем пулнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ЧУВАШМЕДСНАБУ

требуются на постоянную работу: ответственный исполнитель, плановик-экономист, зав. складом и два сторожа.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Ленина, дом № 7.

ТРЕБУЮТСЯ

на постоянную работу ст. инспектор, бухгалтер-ревизор, статистик-экономист, машинистка, делопроизводитель, ротаторщик-экспедитор. Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, улица Набережная реки Волги, дом № 13. Уполнаркомзаг СССР по Чувашской АССР. Отдел кадров.

ТРЕБУЮТСЯ НА ПОСТОЯННУЮ РАБОТУ В ЧЕБОКСАРАХ:

начальник планового отдела, опытный статистик, бухгалтер-ревизор.

В районы: ст. бухгалтер маслосырзаводов. Оплата по соглашению.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. 2-я Герцена, 32, Трест маслопрома.

ЧЕБОКСАРСКОЙ КОМПЛЕКСНОЙ ГЕОЛОГИЧЕСКОЙ ПАРТИИ

требуется на постоянную работу конюх-возчик.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Чернышевская, 6, ком. 9.

МАРИИНСКО-ПОСАДСКИЙ ТЕХНИКУМ ПО МЕХАНИЧЕСКОЙ ОБРАБОТКЕ ДЕРЕВА НАРКОМЛЕСА РСФСР

ОБЪЯВЛЯЕТ

осенний прием студентов на 1942—43 учебный год на отделения:

1. Столярно-мебельное,
2. По деревообработке со специальностями: лесопильного, тарного и обозостроительного производств.

СРОК ОБУЧЕНИЯ ТРИ ГОДА

Техникум готовит механиков-технологов по механической обработке дерева.

В техникум принимаются граждане СССР в возрасте от 15-ти до 30-ти лет, имеющие образование в объеме 7 классов средней школы.

Окончившие 7 классов средней школы в 1941—42 г. г. с отметками «отлично» и «хорошо» по основным предметам принимаются в техникум без экзаменов.

Лица же, сдавшие экзамены за 7 классов средней школы в 1941—42 г.г. не на «отлично» и «хорошо», принимаются в техникум без экзаменов лишь при наличии свободных мест.

Лица, окончившие 8, 9 и 10 классов средней школы, принимаются на 2-й курс без экзаменов.

Поступающие в техникум, за исключением вышеуказанных лиц, подвергаются приемным испытаниям по русскому языку, математике, Конституции СССР.

Прием заявлений производится с 1-го июня по 10-е августа сего года. К заявлению должны быть приложены следующие документы: автобиография, свидетельство об образовании, о рождении, справка о состоянии здоровья, об отношении к воинской обязанности, а лицами, достигшими 16-ти летнего возраста, вместо свидетельства о рождении, должен быть предъявлен паспорт при личной явке.

Приемные экзамены с 20-го по 28-е августа с. г.

Студенты обеспечиваются общежитием, постельными принадлежностями и питанием в студенческой столовой.

ТЕХНИКУМ ИМЕЕТ: учебно-опытные мастерские, электростанцию, оборудованные кабинеты, звуковую кино-установку, радиоузел.

Адрес: г. Мариинский посад, ЧАССР, Майская улица, дом № 30.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 183

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.